Тантăш Хусанкай!

Санăн чĕрӳнти сăмахусене эпĕ нихăçан та манас çук! Епле эс мана ăс парса вĕрентнисем халь те çамрăк чĕреме, пуçăма çĕмĕрсе тăраççĕ.

Ан пăшăрхан, тантăш! Малашне... сана юлташ каллех хĕрӳ чĕреллĕ чăваш... ывăл-хĕрĕсем сиксе тухĕç! Ăна эс шанса тăр!

Акă, эпĕ сан патна хамăн чĕрери сăввăма яратăп. Çак сăвă çеç манăн пăртак техника тĕлĕшĕнчен килĕшет пек. Ку килĕшет пек пулсан, малашнехисем тата лайăхланĕç, шанчăк пур пек туйăнать. Çак сăвă мĕнлине мана пăртак çырса пĕлтерсен аван пулĕччĕ.

Сывă пул!

* * *

**Темрен те хаклă тантăшăм Хусанкай!**

Паян эпĕ хĕпĕртерĕм,
Çăл шыв сыпрăм йăлăмра.
Сив чĕремĕм – хытнă эрĕм –
Халь шерпетлĕ сывлăмра!

Çамрăк юнăм ак ташларĕ
Çепĕç туппăль çуппипе.
Эп халь – пулхăр чăн яш арĕ, –
Ак сикетĕп пит чипер.

Ĕлĕк йăшнă хал-çунатăм
Халь хĕлхемлĕн вăл хыпать...
Акă кӳчĕ çак кун Атăл
Маншăн чаплă ыр хыпар.
Хыпар кӳчĕ аслă Атăл:
Килчĕ, терĕ, тăвану.

Мана ҫыхнӑ тӑл, эс татӑл,
Ирӗк пуҫӑм, аван ут!

Хыпар ячӗ паттӑр тусӑм,
Тин чӗремҫӗм хыт тапать.
Чаплӑ паттӑр капкӑн хуҫнӑ,
«Сыв пул, – тенӗ, – Асхапат!..»

Паян эпӗ ҫунат хыврӑм,
Ҫӑл шыв сыпрӑм пӗлӗтре.
Ҫамрӑк пуҫшӑн ӗнтӗ йывӑр
Пулмӗ сӗрӗм-тӗтӗре.

Сыв чӗрешӗн – хытнӑ эрӗм –
Халь вӑл тутлӑ лиманат.
Кӑмӑл юхрӗ, – ак пӗверӗм, –
Татмӗ, каймӗ ҫырмана.

Кив поэзӑ тӑмлӑ, – вантӑр!
Пире кирлӗ вут чӗлхи!
Кӗмӗл лира эс, тӑванӑм,
Эпӗ – ҫиҫӗм йӗс ҫилхи!
Чӗмпӗр, 1927 ҫ.,
Петӗр!

...Тавах сана, Петӗр! Эс вӗрентнӗ тӑрӑх анчах эпӗ сӑввӑмсен чӗлӗхӗсене ӗнертӗм. Халь манӑн кӗслем те ӗнтӗ кӗвве килет. Техника тӗлӗшӗнчен малашне аптрамӑпӑр-ха! ...Хам ...чӑвашла чылай ҫырса тултартӑм ӗнтӗ. Пӗрер сӑввине сана та ҫырса пӗлтерме тӑрӑшӑп. Анчах

ман сăвăсем кăмăла кайĕç-ши вара? Ман сăввăмра илемлĕ, хĕрӳллĕ сăмахсем çук. 1

...Урăх нимĕнех те çырмалли çук.

...Санăн тусу – Митта Ваçлейĕ.

1927 ç., 12/1, Чĕмпĕр.